Спорт

# Парнесем – чи вăйлисенче

Вырсарни кун, сентябрĕн 20-мĕшĕнче, районти тата республикăри спортсменсем Олимп чемпионкин В. Егорован парнисене çĕнсе илесшĕн кăçалхипе 16-мĕш хут старта тухрĕç. Муркашри стадион çийĕн шуса иртекен тĕксĕмрех пĕлĕт татăкĕсем



çине час-часах пăхкаласа ăмăртусене хутшăнма килнĕ 900 ытла спортсмен «ыйтнипех» çанталăкĕ çумăрсăр пулчĕ пулĕ.

Нумай çамрăк спортсмена килĕшекен ăмăртăва район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçрĕ. Вăл пысăк спорта тухасси шăпах çакăн евĕрлĕ ăмăртусенчен пуçланни пирки каларĕ. «Çамрăксен çулталăкĕнче çамрăксен хăйсен мĕн пур хастарлăхне кăтартмалла», – çапла хавхалантарчĕ Юрий Александрович ăмăртăва пуçтарăннисене.

1992 çулхи Олимпиадăри çĕнтерӳ хыççăн иртме пуçланă та ĕнтĕ В. Егорова парнисемшĕн иртекен ăмăртусем. Малтанах вĕсем район шайĕнче кăна иртнĕ тата унта шкул ачисем кăна хутшăннă пулсан, халĕ вара – республикăри чи массăллă ăмăртусенчен пĕри. Çакна ЧР спорт, физкультура тата туризм министрĕн çумĕ С.В. Мельников та хăйĕн саламлă сăмахĕнче палăртмасăр иртмерĕ. Кăçалхи ăмăртусене вара «Наци кросĕпе» çыхăнтарнине те пĕлтерчĕ вăл.

Ăмăртăва килсе çитнĕ тĕнчипе паллă В. Соколова, В. Егорован амăшĕпе йăмăкĕ те спортсменсене ăнăçусем сунчĕç. Валентина Егорована тĕнче шайне тухма пулăшнă тренер М. Кузнецов Муркаш çĕрĕ çине килни те çамрăксен кăмăлне хăпартрĕ.

Ăмăртăвăн тĕп судйи В. Петров тĕрлĕ ӳсĕмри шкул ачисен, предприятисемпе организацисен, хуçалăхсемпе ял тăрăхĕсен командисене старта тухмалли йĕркепе паллаштарчĕ.

Пĕр чупу теприн улшăнчĕ, ăмăрту кал-кал пычĕ. Шупашкартан ятарласа килнĕ Ю. Плотников комментатор сăмахĕсем стадионĕпех янăрарĕç: чупусенче мала тухнисене пъедестал çине чĕннине те, старта камсем тухассине те пĕлсе тăма май пулчĕ.

Ăмăртусене хутшăнма пурĕ 27 шкул команди, вĕсем хушшинче Сĕнтĕрвăрри, Горномарийски районĕнчи тата Çĕнĕ Шупашкарти олимп резервĕсен училищинче вĕренекенсем те кăмăл тунă.

Малтанхи чупусем вĕçленсенех пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсем хушшинче Тойкилтĕсене çитме пултараканни пулмасть тесе шанчăклăнах шутлама май пулчĕ. Ачасем тренировкăсенче тăрăшни, хăйсене спортра пулăшса пыракан А. Васильев тренерпа шкул директорĕ И. Сергеев хавхалантарни вăйлă ытларах хушрĕ пулас – пĕрремĕш вырăн вĕсен пулчĕ. Иккĕмĕш вырăна Атапайсем тухрĕç, виççĕмĕшне тивĕçлипех Кашмаш шкулĕн команди çĕнсе илчĕ.

Вăтам шкулсем хушшинче Калайкассисем мала тухрĕç.



Вĕсемпе пĕрле пъедестал çине 2-мĕш вырăн çĕнсе илсе Çатракасси шкулĕн, 3-мĕш вырăна тухса Ярапайкасси шкулĕн командисем те тăчĕç.

Хуçалăхсен, ял тăрăхĕсен тата предприятисемпе организацисен командисем ăмăртнине сăнама та питĕ кăмăллă пулчĕ. Пурĕ 15 команда старта тухрĕ. «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин чысне хӳтĕлекенсем çак кĕрешӳре 1-мĕш вырăн çĕнсе илчĕç. Вĕсем хыççăнхи призлă вырăнсенче районти шалти ĕçсен пайĕн (2-мĕш вырăн) тата «Сывлăх» ФСК командисем пулчĕç.

Кашни уйрăм çĕнтерӳçĕ те, командăсемпе призлă вырăнсенче тухнисем те хаклă парнесем, медальсемпе дипломсене тивĕçрĕç.

Муркашри черетлĕ спорт уявĕ хăпартлануллăн та савăккăн иртрĕ. Çав хушăрах чăвашлăх сăнĕ те палăрмаллах çапрĕ ăна. Чуманкассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи «Апаш» художество пултарулăх ушкăнĕ шăрантарнă чăваш юррисем, чăваш тумĕ тăхăннă илемлĕ пикесем эпир камсем тата ăçтан пулнине манмалла марри çинчен аса илтерчĕç. Паян эпир, Муркаш чăвашĕсем, Валентина Егорова пек хастар та паллă ентешсемпе мăнаçланма пултаратпăр, ырана валли вара тăрăшсах ĕçлемелле.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин команди кубока тивĕçлĕ; Тойкилтĕсенчен интервью та илчĕç.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Редактор пурнăçĕнчен

# ХĂРУШĂ ЙĂНĂШ

Куславккари «Ялав» хаçат редакторĕнче эпĕ 1986 çулта ĕçлеме пуçларăм. Паллă ĕнтĕ, вăл вăхăт – перестройка тени амаланса вăй илнĕ тапхăр. КПССăн Тĕп Комитечĕн Генеральнăй секретарĕн Михаил Сергеевич Горбачевăн ячĕ кашнин чĕлхинчечĕ ун чухне. Хаçатра та, радиопа телевиденире те кĕрлесе тăратчĕ вăл. Пирĕн хаçат та, паллах, аякра тăман, перестройкăпа унăн лидерĕ çинчен çырсах тăнă.

Чиперехчĕ, анчах пĕррехинче пăтăрмах сиксе тухрĕ. Хаçатăн малтанхи страницинче Горбачев вырăнне «Гробачев» тесе лаплаттарса хунă. Ак, тамаша! Йăнăшнă тейĕпĕр, пулать кашниннех, анчах та мĕнле сăмахра йăнăшса мĕнле сăмах çырса хунă: гроб – ачев! «Гроб» тени мĕн тени? Вилĕм тени. Эппин, эпир перестройкăна питĕ хăвăрт, вăхăтсăр çĕр ăшне чиксе хума шутламан-и вара? Лекет «çӳлтисенчен»! Пуçа касаççĕ...

Çапла ăшталаннă вăхăтра мана хамран аслă юлташсем, редакцире ĕмĕрне ĕмĕрленĕскерсем, ăслă шухăш пачĕç (чăн та, мĕн тери хаклă иккен вăл опыт тени!): пӳрне вĕçне типографи краскине илмелле те хаçатри йăнăш вырăна вараласа тухмалла. Ăнсăртран станок çапла çапнă теччĕр...

Çапла турăмăр та – коллективпа сĕтелсем хушшине вырнаçса лартăмăр. Эх! вараларăмăр тăван хаçата! Тиражĕ пысăкчĕ – ултă пин экземпляр ытла. Ĕçе пĕтерсенех те малалла мĕн пулассине кĕтме пуçларăмăр. Вăхăт иртрĕ – сасхура пулмарĕ.

Кайран, нумай çул иртсен, çакăн пирки вăл вăхăтра района ертсе пынă, партин пĕрремĕш секретарĕ пулнă çынна каласа патăм.

– Асăрханă, эпир сирĕн чеелĕхе пĕлнĕ, – терĕ вăл. – Пултарать ку çамрăк редактор, терĕмĕр. Йăнăшне ятарласа туман вĕт. Ятарласа тунă пулсан, лекетчĕ... – шĕвĕр пӳрнипе юнарĕ вăл.

**В. КОНСТАНТИНОВ.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**Блоки керамзитобетонные 20х20х40, бетон, раствор, песок, гравмасса, щебень, асфальт, ЖБИ.**
**Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-668-84-40.** 26-40.

**Срочно продаю хозяйство в с. Моргауши по договорной цене. Асфальт, газ, вода.**
**Тел.: 8-905-197-50-78, 8-908-845-33-27.**

**Продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши по ул. Парковая, д. 5А, общей площадью 47,5 кв. м. Цена договорная. Тел.: 8-906-131-49-12. Михаил.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера, столы, скамейки банные. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84.** 5-5.

**Гравмасса, керамзит, кирпичи всех видов, песок речной, карьерную щебень, торф, керамзитобетонные блоки. Доставка.**
**Тел.: 8-906-383-65-13, 8-903-389-98-62.**


**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:070603:76, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кадикасы, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:070603, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 955 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Участница долевой собственности Купцова Алифира Никитична, 01.08.1933 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, выселок Первое мая, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Юнгинское, на территории землепользования СПК «Новая Юнга», участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:080901 площадью 1,38 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все возражания по месту расположения земельного участка прошу направлять по адресу доверенного лица: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Большой Сундырь, ул. Горького, д. 28, Маринкину Валериану Игоревичу ценным письмом с вложением.**

**Участник долевой собственности Кудряшов Афиногент Андреевич 24.03.1940 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Центральная, д. 26, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Юнгинское, на территории землепользования СХПК «Новая Юнга», участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:080901 площадью 1,38 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции..**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**
**1. Администрации Юнгинского сельского поселения.**
**2. Кудряшову Афиногенту Андреевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Центральная, д. 26.**

**Участник долевой собственности Кудряшов Сергей Афиногенович 23.01.1973 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Центральная, д. 26, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Юнгинское, на территории землепользования СХПК «Новая Юнга», участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:080901 площадью 1,38 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции..**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**
**1. Администрации Юнгинского сельского поселения.**
**2. Кудряшову Сергею Афиногеновичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Центральная, д. 26.**

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ
**Николай Германович**
**МИХАЙЛОВ**
механизатор вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ
**Раиса Ильинична**
**ИЛЬИНА**
пенсионерка вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Çатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ кунта электрик тата хуралçă пулса ĕçленĕ
**Николай Александрович**
**СТЕПАНОВ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.

Тирпей-илем

# Пĕрле чух ĕç те кал-кал

Хамăр пурăнакан вырăна хамăрăнах тирпей-илем кĕртмелли пурне те паллă. Таврари çут çанталăка упрамалли те пирĕн кашнин тивĕçĕ. Таçтан такам килсе йывăç лартса е çӳп-çап пуçтараса парассине шанаканăн малашлăхĕ те уçăмлă мар.

Çакна тĕпе хурса сентябрĕн 19-мĕшĕнче Çеменкасси ялĕнче пурăнакансем ял варринчи пĕве йĕри-таврашне тирпейлеме пуçтарăнчĕç. Ялта пурăнакансенчен чылайăшĕ пуçтарăнчĕ çак ĕçе пурнăçлама.

Иван Никонорович Мудров машинипе вăрмантан акаци тураттисене тиесе килчĕ. Кĕске хушăрах пĕвеленĕ пĕвене илемлĕ сăн кĕртрĕç ял çыннисем.

Темĕнле лава та вырăнтан тапратакан кирлĕ. Ку пархатарлă ĕç те пуçаруçăсăр мар. Ăна йĕркелесе пыраканĕ депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ Валерий Иванович Вязов пулчĕ. Пирĕн таврара çакăн пек активлă та пултарулла çын пулнишĕн ял халăхĕ питĕ савăнать.



Пĕлтĕр ял çывăхĕнче лартнă йывăçсем çумне вара кăçал тата тепĕр 5 пин хунав лартма шутлаççĕ Çеменкассисем. Пурте пĕрле тăрăшсан çеç пысăк ĕçсене пурнăçлама май пуррине аван ăнланаççĕ вĕсем.

**С. МИХАЙЛОВА,**
**Оринин ял тăрăх администрацийĕн специалист-эксперчĕ.**

Вулакан пултарулăхĕ

***Çак илемлĕ сăвăна редакцие Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнчи Шупуç ялĕнче пурăнакан Л. Романова ярса пачĕ. «Ватă çынсен кунĕ çитсе пырать. Тивĕçлĕ канăва тухнă хаçат тусĕсемшĕн çак сăвă манран уяв саламĕ пултăр», – тесе çырать вăл. Мĕнех, çитес уяв ячĕпе парне пултăр сире валли, пирĕн хисеплĕ вулакансем – ватă çынсем.***

## Тав

Кăткă йăвинче пулман,
Чĕкеçпе пĕрле вĕçмен,
Кăткă пек ĕçчен пулма,
Чĕкеç пек чĕвĕлтетме
Вĕрентнĕ пире анне.
Хурăнлăхра çуралман,
Чиелĕхре çитĕнмен,
Хурăн пек йăрăс пĕве,
Чие пек чипер сăна
Илнĕ атте-аннерен.
Атте ырă пулнăран,
Анне сăпай пулнăран
Ӳсрĕм сăпай та ĕçчен.
Тав, атте, тавах, анне,
Ӳстернĕшĕн юратса.
Çĕршывра лăпкă пулсан,
Ик алăра ĕç пулсан,
Çумра савнă çын пулсан,
Атте-анне сыв пулсан,
Унран ытла телей çук.

**Л. РОМАНОВА.**


Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

За главного редактора В.Л. Шапошников.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 22.09.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3800.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.